# Выльăх йышне чакарма сăлтав çук

*Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.*

май паракан ĕнесенех аша яма тивнĕ. Агрофирмăра сĕт сăвасси пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 5,7 процент, выльăхсен хисепĕ 18 процент чакнă. Хуçалăх сĕт нумай паракан ĕнесене тытса тăма уйăракан патшалăх субсидине илеймест. «Хушка пуççен» йышне «Родник», «Кольцовка» агрофирмăсенче, «Юнтапа», «Победа», «Знамя», «МТС» кооперативсенче чакарнă.

*– Георгий Павлович, ĕне выльăх йышĕ пĕчĕкленнин сăлтавĕ мĕнре?*

– Кăçалхи вунпĕр уйăхра районти ял хуçалăх организацийĕсенче 2173 пăру илнĕ е пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан 96 пуç сахалтарах. Хăш-пĕр ял хуçалăх организацийĕсенче ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерес ĕçе начар йĕркеленĕ. «Родникра» 82 пăру, «Броневикра» – 56, «Знамя» кооперативра 34 пăру сахалтарах илнĕ. Ăратлăха лайăхлатассипе ĕçлесси тĕп вырăнта пулмалла. Кĕтĕве 25 – 28 процентран кая мар çамрăк ĕнесем кĕртмелле. Ăратлă çамрăк выльăха çĕршыври малта пыракан хуçалăхсенчен илсе килмелле. Çулталăкне кашни 100 ĕне пуçне 90 пăруран кая мар илмелле. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин бюджечĕсенчен выльăх-чĕрлĕх отраслĕне аталантарма кăçал 8 миллион та 62 пин те 134 тенкĕ уйăрнă. Хăш-пĕр специалистсем кирлĕ пек ĕçлесе пыраймаççĕ, професси ăсталăхне туптамаççĕ. 2013 çулхи кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕнчен Шупашкарти Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче ĕне выльăхсене чуптарас енĕпе тимлекен операторсен курсĕ уçăлать. Ял хуçалăх организацийĕсен ертӳçисен яваплă çынсен пĕлĕвне тарăнлатассипе тăрăшмаллах. Йăлана кĕнĕ йĕркепе çулсеренех Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче те вĕрентӳ иртет, выльăх-чĕрлĕхе пĕтĕлентерекен операторсем ăсталăха туптама пултараççĕ. Професси тĕлĕшĕнчен хăшĕ пултаруллине палăртма районта кашни çул конкурс та йĕркелетпĕр.

*– Хĕл хырăмĕ пысăк. Апат бази çирĕп пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ.*

– Ĕне выльăх продукцине илессине чакарма нимĕнле сăлтав та пулмалла мар. Мĕншĕн тесен выльăх-чĕрлĕх валли хĕл каçма апат хатĕрлеме кăçал условисем пулчĕç.

Районĕпе илсен кашни условнăй выльăх-чĕрлĕх пуçне 26 центнер апат единици хатĕрленĕ. Вăрнарти аш-какай комбинатĕнче, «Знамя», Карл Маркс ячĕллĕ, «Янгорчино», «Броневик», «Хорнзор», «Мураты», «Победа» хуçалăхсенче кăтарту тата пысăкрах, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли 30 центнер апат янтăланă.

*– Аталану çулĕпе пырас тесен пуçаруллă утăмсем пулмалла.*

– Вăрнарти аш-какай комбиначĕ самана таппипе тан пырать. Агрохолдингăн Малтикас Ялтăрари хушма хуçалăхĕнче кăçал 1000 пуç ĕне вырнаçмалăх комплекс хута кайрĕ. Вăрнарти аш-какай комбинатĕнче сĕт туса илесси самаях ӳсĕ. Çакă районти кăтартăва лайăхлатĕ. Палăртмалла, çак предприятире тепĕр çул 500 пуç ĕне выльăх самăртмалли цех çĕклесе лартмалла. Çавăн пекех «Луч» кооперативра та пуçаруллă утăм тăвасшăн. 2013 – 2014 çулсенче 400 пуç ĕне выльăх вырнаçмалăх вите хута яма палăртнă.

Выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарас тесен витесене тĕпрен çĕнетессине те пысăк тимлĕх уйăрмалла.

**Е.ПОРФИРЬЕВА**
**калаçнă.**

ПРАВО

# Йĕрке çирĕпленнĕ

Çула çитмен çамрăксене алкоголь продукцине ваккăн сутнăшăн административлă майпа явап тыттармалли йĕрке татах та çирĕпленчĕ. Халĕ 18 çула çитмен çамрăксене спирт хутăшлĕ шĕвек сутнăшăн граждансене 30–50 пин тенкĕ таран штраф хураççĕ. Ĕçлĕ, должноçри çынсен штраф виçи 100 – 200 пин тенкĕпе танлашать. Юридици сăпатлисен айăпа кĕрсен 300–500 пин тенкĕ тӳлеме тивет. Раççей Федерацийĕн Административлă правăна пăсни çинчен калакан Кодексĕн 3.5-мĕш тата 14.16-мĕш статйисене улшăнусем кĕртни çинчен федераллă саккуна 2012 çулхи чӳк уйăхĕн 12-мĕшĕнче йышăннă. Кодексăн 14.16-мĕш статйин 2.1-мĕш пайĕн иккĕмĕш абзацĕнче çӳлерех асăннă йĕркесене



палăртнă.

Çĕнĕлĕх кăçалхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ те ĕнтĕ.

**С.МАРТЫНОВА,**
**Раççей Шалти ĕçсен министерствин «Вурнарский» пайĕн инспекторĕ полици аслă лейтенанчĕ.**

СУД ТЕНКЕЛĔ ÇИНЧЕ

# Хирĕçӳрен инкек тухнă

Вăрнар район сучĕ Чулхула облаçĕнче пурăнакан 37-ри уйрăм предприниматель РФ Уголовлă кодексĕн 109-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче палăртнă преступление тунăшăн айăплă тесе йышăннă.

Çĕмĕрлери следстви пайĕ тата суд палăртнă тăрăх, вăл Калининăри пасарта тепĕр коммерсантăн шăлне çапса кăларнă, лешĕ вара чыхăнса вилсе кайнă.

Май уйăхĕн 24-мĕшĕнче ирхине ирех 56-ри предприниматель (вăл та Чулхула облаçĕнчен) Калинино салинчи ял хуçалăх рынокне килнĕ. Пилĕк сысна çури туяннă та хăйĕн машини çине тиеме тытăннă. Çак вăхăтра ун патне пынă тепĕр предприниматель (халĕ айăпланнăскер) пĕр сысна çурине туртса илнĕ. Çак сăлтавпа иккĕшĕн хушшинче хирĕçӳ тухнă, çамрăкки аслăраххине темиçе хутчен пуçран çапнă. Тухса ӳкнĕ шăлпа чыхăннă 56-ри арçын инкек вырăнĕнчех вилнĕ.

**С.ВАСИЛЬЕВ,**
**Следстви управленийĕн районсем хушшинчи Çĕмĕрлери следстви пайĕн следователĕ юстици майорĕ.**

КОРРУПЦИЕ ХИРĔÇ

# Саккуна пăсакансене алхасма памастпăр

**Çулсерен декабрĕн 9-мĕшĕнче, Пĕрлешӳллĕ Нацисен Организацийĕн Тĕп ассамблейи çирĕплетнĕ йĕркепе, Коррупцие хирĕç кĕрешмелли Пĕтĕм тĕнчери куна паллă тăваççĕ. Районта коррупци пулăмне хирĕç тăни çинчен пирĕн корреспондента Раççей Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи Следстви управленийĕн Çĕмĕрлери следстви пайĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсемпе тимлекен следователĕ Сергей ВАСИЛЬЕВ каласа пачĕ. Пысăк опытлă сотрудник коррупципе çыхăннă уголовлă кăткăс ĕçсене тишкерет.**



*– Сергей Валерьевич, эсир паллă аслă шкулта юридици пĕлĕвĕ илнĕ. Анчах мĕншĕн, калăпăр, юрисконсульт е адвокат ĕçĕсене суйласа илмен, следовательте тимлеме шутланă?*

– Следователь профессийĕ тавралла пулса иртекен пĕтĕм пулăмсене пĕлме-ăнланма, хутшăнма май парать. Этем психологине, общество пăхăнса пурăнакан саккунсене лайăх пĕлни питĕ кирлĕ. Шăпах çакăн пек ĕç ман кăмăла каять те...

*– Эсир кăткăс ĕçсенчен пĕрне – Вăрнар хула поселенийĕн администрацийĕн пуçлăхĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе – тишкернине пĕлетпĕр...*

– Следстви шухăшĕпе, поселени пуçлăхĕ, поселокри Советски урамĕнчи тротуара юсама конкурсирттерекен комисси председателĕ пулнă май, телефонпа шăнкăравласа поселени специалист-экспертĕнчен «Новые технологии» общество конкурса заявка тăратнине пĕлнĕ. Çакăн хыççăн пуçлăх, конкурсра «Вурнарыдорстрой» обществăна çĕнтерттерес тĕллевпе, «Новые технологии» общество заявкăра кăтартнă суммăна пĕлме конверта вăрттăн уçма хушнă. Каярахпа вăл хăй паллакан предприяти директорне котировка заявкинче маларах палăртнă суммăна пĕчĕклетмеллине пĕлтернĕ. Çав вăхăтра комисси секретарĕ «Новые технологии» обществăн заявкине çĕнĕрен çыпăçтарса хунă. Поселени пуçлăхĕ çĕнтерттерме шутланă предприяти директорĕ вара çав кунах хăйĕн заявкине улăштарса килсе панă, комисси секретарĕ ăна йышăнса унчченхине çĕннипе ылмаштарнă. Çапла майпа Вăрнар хула поселенийĕн администрацийĕ конкурс кăтартăвĕсем тăрăх «Вурнарыдорстрой» обществăпа Советски урамĕнчи тротуара юсама муниципаллă контракт çырнă. Вăрнар район сучĕ поселени пуçлăхне айăплă тесе йышăннă, ăна условнăй майпа ирĕкрен хăтарнă.

Уголовлă ĕçе тишкерме Шалти ĕçсен Чăваш Республикинчи министерствин экономикăри преступленисемпе кĕрешессипе тата коррупцие хирĕç тăрассипе тимлекен оперативлă шырав пайĕ пысăк пулăшу кӳчĕ. Ку подразделени пулăшăвĕсĕр коррупциллĕ пĕр преступлени те тишкерĕнмест.

*– Сирĕн шутпа, коррупциллĕ преступленисем тума мĕнле сăлтавсем хĕтĕртеççĕ?*

– Коррупци халиччен те пулнă. Анчах паян ку сиенлĕ пулăмпа вăйлăрах кĕрешме тытăнчĕç. Рынок тытăмĕ анлăланса, бизнес аталанса пынăçемĕн коррупцие сарăлма майсем пысăкрах. Тĕрĕссипе, тĕрĕслевсĕрлĕх, хăйсене явап тыттармасса шанни, явапсăрлăх взятка илме хĕтĕртет. Нумай чухне коррупциллĕ преступленисене патшалăх пурлăхне хăйсеннипе пăтраштаракан влаç представителĕсем (уйрăмах район, ял шайĕнчисем) тăваççĕ.

*– Вĕрентӳпе сывлăх сыхлавĕнче те коррупци пур теме пулать-и?*

– Шел те, коррупци ку сферăсенчен те аякран иртсе кайман. Хальхи вăхăтра, сăмахран, район администрацийĕн вĕрентӳпе çамрăксен политикин специалисчĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкеретпĕр. Ăна уптавлă ĕç тунă тесе айăплаççĕ. Тепĕр тĕслĕх – училище ертӳçи тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕç. Сывлăх сыхлавĕ енĕпе илес-тĕк, «Центр гигиены и эпидемиологии» учреждени врач-бактериологĕ саккуна пăснă тĕслĕх пулнине каласа хăвармалла. Вăл консультацисемпе тĕрĕслевсем тухмасăрах санитари кĕнекисем туса парса хăйĕн «бюджетне» пуянлатнă.

КРИМИНАЛЛĂ ХРОНИКА

# Вăрлакан пурпĕрех çакланать

**Аçăмçырми ялĕнче вырсарни кун тăр кăнтăрлах пĕр хуçалăха ӳсĕр арçын вăрттăн кĕрсе кайнă. Çак вăхăтра хуçисем килте пулманнипе усă курса тем çаклатса тухасшăн пулнă ĕнтĕ вăл. Анчах кил хуçи хĕрарăмĕ сасартăк таврăнни чăрмантарнă киревсĕр ĕçе вĕçне çитерме. Арçын холодильникрен апатçимĕç йăкăртма хăтланнă тесе шутлаççĕ.**

Канмалли кунсенче такам «Кольцовка» обществăн столовăйĕн пушă ларакан çуртне çăра çĕмĕрсе кĕнĕ. Вăрă, сутас тĕллевпе, тĕслĕ металл шыранă ахăртнех: пăхăр электрокабель, газ комфоркин çӳлти пайне, хромланă пăралук çаратнă.

Иртнĕ ытлари кун каçхине Хурăнсур Çармăсри кил-çуртран 5 аккустика колонки, видеомагнитофон, спутник антеннин ресиверĕ тата ытти япаласем çухалнă. Оперативлă шырав ĕçĕсем ирттернĕ май, йĕрке хуралçисем ют киле тустарнă çынна хăвăртах тупса палăртнă. Преступление ку ялтах пурăнакан 36-ри арçын, унччен те судпа айăпланнăскер, тунă тесе шутлаççĕ.

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче каллех поселокри спорткомплексăн раздевалкинчен ют пурлăха вăрланă тĕслĕх пулнă. Хальлĕхе тупса палăртман çын 13-ри ачан курткин кĕсйинчен телефон кăларса илнĕ. Полици сотрудникĕсем ку преступление уçса парассипе шырав ĕçĕсене пурнăçлаççĕ.

Ноябрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 29-мĕшĕчченхи тапхăрта Малти Ишек ялĕ çывăхĕнчи «Феникс» обществăн столовăйĕнчен трактор двигателĕн пайне йăкăртнă. Сăмах май, ку «Феникс» обществăн территорийĕнче пулнă пĕрремĕш тĕслĕх мар. Кăçал кунта темиçе хутчен те пурлăха çаратса тухнăччĕ.

Хальхинче вăрăсене – 35-ри арçынпа 19-ти çамрăка – полици ĕçченĕсем çийĕнчех çулса илнĕ.

Ноябрĕн 28-мĕшĕнчи каçхине Вăрнарта вăйпа хăратса 22-ри хĕрĕн кĕсье телефонне туртса илнĕ. Преступлени çинчен пĕлтернĕ хыççăнах вăрă йĕрĕпе шалти ĕçсен пайĕн «Шырав» ушкăнĕ кайнă. Йĕрке хуралçисем ăна К.Маркс урамĕнче тытса чарнă, унăн кĕсйинче вăрланă телефон та тупăннă.

**И.ПЕТРОВА.**

